С(чув)
К Х98
23121-чув
Б 19896

П. Хузангай

# Çĕнтерӳ юрри

Чăвашгосиздат · 1947

Кф
С(Чув.)
Х98
К

П. ХУЗАНГАЙ

# ÇĔНТЕРӲ ЮРРИ

*Сăвă кĕнеки*

кр

ЧĂВАШГОСИЗДАТ
Шупашкар — 1947

ПРОВЕРЕНО
2007

M 23121 - чув

Чувашская
республиканская
БИБЛИОТЕКА
им. М. ГОРЬКОГО

## Пархатар юрри

Те эсир сăнанă çак?—
Кучухне ват стариксем
Пĕлми пулчĕç канăçа,
Иç ларасшăн мар сĕнксе.

„Авалхи чăваш эп,—тет
Йăкăнат пичче хăйне,—
Мана ĕнтĕ киремет
Хăй те маннă ахăрнех.

Тахçанах кĕнекерен
Тухрăм пулĕ ĕнтĕ те,
Çĕр те тунсăх та пире,
Телее—кун пур-мĕн!—тет.

Йăкăнат хуртсем пăхать,
Çăвĕпех вăл утарта.
Вăрман пирĕн пит паха,
Ун пекки тек çук-тăр та.

„Пырса кур-ха... курорта,—
Тет старик вара мана,—
Сывлăш уçă, тупата
Пыр-ха, шăллăм, хăнана".

Кайрăм эп хайхи тепле
Хурт ăсти патне пĕрре.
Сап-сар улăм шĕлепке
Çаврăнатчĕ ĕшнере.

Шĕлепке хĕррисенчен
Хĕлĕх питлĕх карăнать.
Хурчĕ уйăрнă иккен,
Илĕртет старик ăна:

Сĕрмекупăс каласа
Сыртарасшăн хăтланать.

Хурт çурийĕ, чăнласах,
Хурама çине сырать.

„А...килех!—тет Йăкăнат
Хĕлех питлĕх витĕрех.—
Санпалан эп тахçанах
Калаçасшăнччĕ пĕрре...“

—Мĕн апла?—„Тем мар ытлах...
Мускавра пултăм-çке-ха...
Ну.. начар çынна, паллах,
Чĕнмĕç ĕнтĕ выставка.

„Мухтанать ку“—ан тесем:
Ман вăрман колхозĕнче
Улт уралла йышăмсем
Калама хал çук ĕçчен.

Пур утарçă тĕлĕнет:
„Ăрăмçах эс, ахăрах,
Хурт чĕлхи пĕлетĕн“,—тет
Пĕр пĕлĕш мана вара.

—Чĕлхи унăн пур та-ха...—
Тетĕп эпĕ шахвăртса.
Мĕн чĕлхи! Алла пăхать.
Тирпее савать, чыса.

Хурчĕсем ман, ху куран,
Сĕрмекупăс сассине
Юратаççĕ; нихăçан
Эп тартман уйарнине“.

Йăкăнат хурт çурине
Алтăрпа ăсса ярать
Виçкĕтесле пуркине,
Хăй çапла калать вара:

„Уншăн-куншăн сăмах çук,
Ĕç анать-ха пĕр тăтăш.
Ху пĕлетĕн: ĕлĕк чух
Юрăсем юрлаттăм кăшт.

Сĕрмекупăс кукрашки
Шай пыратчĕ ĕлкĕрсе.
Ялйышсен такмак-ташши—
Пурте эп ĕнернисем.

Савăнни те пуртăрах
Вăрăм ĕмĕр тăршшĕнче.
Çапах хурлăх ытларах
Сĕртеретчĕ сĕркĕче.

Пуянсен туйне чĕнсен,
Кĕреке умне тăрса,
Вăйă-кулă çеммисем
Янраттартăм купăса.

А киле пырсан, курап
Ларать йышăм усăнса.
Чăлана çакса хурап
Йăлăнтармăш купăса.

„Ĕçкĕрен ĕçке çӳрен,—
Тесе арăм ӳпкелет,—
Ачасем паян çимен,
Мĕн кӳретĕн-ха киле?“

—Кĕреке юлашкине
Парса ячĕç ак чиксе,—
Тетĕп те ачасене
Валеçетĕп татăксем.

Çывăраççĕ мĕскĕнсем,
Кăшт чĕре сури туса.
Хĕрĕнкĕ ĕмĕтĕмсем
Хĕтĕртеççĕ купăса.

Эп илетĕп чăлантан
Ĕмĕрхи юлташăма.
Тин пуçлап чунтан-вартан
Хампа хам сăвăлашма.

Йывăшать хĕлĕх, йĕрет
Вăрăм çĕрĕн варринче.

Ыратать, сурать чĕре,
Ют пек уншăн пур тĕнче.

Пĕр никам та çав сасса
Итлеймерĕ манăнне.
Çыншăн—пултăр савăнса,
Сан хуйху ăна мĕне!..

Ак еплеччĕ, шăллăм, ман
Елĕкхи шăпам-тӳпем.
Тултарсам камăлăма:
Çĕнĕ юрă итлесем...

„Пархатар юрри“ тесе
Калама пулать ăна.
Е çак хурт пӳртне кĕрсе,
Е кунтах—тăнла кăна...“

Йăкăнат пичче пăртак
Купăсне ĕнерчĕ те,
Пур вăрман та шăпăртах
Пĕр самант ăна кĕтет.

Тĕрелерĕ купăса
Вăл сухал айне вара.
Вăрман урлă янраса
Юрă кайрĕ çĕршывра...

* * *

„Сархаякан вăрман çулçине
Епле ешĕл усрас кĕркунне?
Çыру пĕлмен çынна иртнине
Кам тавăрса парас куç умне?
Никам та мар, тăван, ним те мар,
Такмак хутаççине халь салтар.

Пĕр хум çитсе ишет теприне.
Епле тупас вĕçне-хĕррине?
Аслаçăрсем асап курнине
Кам каласа парас кучухне?

Никам та мар, тăван, ним те мар
Такмак хутаççине халь салтар.

Усрав саркайăк пек юррăма
Усраттăм чи кайран юрлама.
Анчах кунçул вĕçне пĕлме çук,
Юрла çунат ӳссе çитнĕ чух!
Епле такмаклас мар, юрлас мар,
Кăмăл тулли пулсан пархатар?

Ялта ялпуç пулса юлтăм эп,
Хамран ватти ĕнтĕ çук-тăр теп.
Анчах—мĕскершĕн вăл?—тин кăна
Пурăна пуçланă пек туйăнать
Мĕншĕн тесен халь тин, ĕлĕк мар,
Куратăп эп, тăван, пархатар.

Çĕр варринче тухса карташне
Пайтах тинкернĕ эп тӳпене:
„Кăвак хуппи уçсам ман тĕлте...“
Тесе кĕл тунă сив пĕлĕте.
Çук, уçăлмарĕ вăл яр та яр,
Çук, тăкăнмарĕ çав пархатар.

Вунçиччĕмĕш çулта кĕркунне
Тин куртăмăр кăвак хуппине.
Аçа çапса кисренчĕ тĕнче,
Тасалчĕ çĕр çав вут ăшĕнче:
Тивĕçсĕре çунтарчĕ пушар,
Тивĕçлине кӳрет пархатар.

Чăн Улăпĕ иккен Мускавра
Выртать Кремльпеле юнашар.
Вăл вилнĕ мĕн, анчах ун тавра
Никам çĕнтерейми вăйлă çар.
Вăл Ленин! Çав чăн Улăпăмăр,
Пĕр çавăнтан килет пархатар.

Вăл вилнĕ мĕн, Владимир Ильич,
Гранит мавзолейре ун ӳчĕ.

Сума суса унта кӗтӗм эп,
Пуҫа тайса унтан иртрӗм эп.
Вӑл вилнӗ мӗн... анчах вӑл ҫук мар,—
Иксӗлмиех халь ун пархатар.

Ҫук мар, ҫук мар чӑн Улӑпӑмӑр,
Кам икенне пӗлетӗр хӑвӑр,
Кам икенне пӗлет пур тӗнче,
Илтменни ҫук никам ун ҫинчен.
Ҫав Улӑппа тӑван ҫӗр патвар,
Вӑл—Сталин халь, унра пархатар.

Кам тӑрӑшать, тӑкать хура тар,—
Вӑл уншӑн куҫ хупмасть ҫӗрӗпе,
Иӗпхӗн хура ҫӳҫне шуратать
Шухӑшпалах пайри-пайрипе...
Мӗн калаҫа ӑна тав тӑвар?
Кашни сӑмахӗ ун—пархатар.

Халлапҫӑсем халлап хайлӗҫӗ,
Такмакҫӑсем такмак калӗҫӗ,
Анчах вӑл тӑвакан пур ӗҫе
Епле сӑмах ҫине хурӗҫӗ?
Мӗнле кӗвве-сӑвва шӑнӑҫтӑр
Пире вӑл кӳрекен пархатар?

Эп куртӑм ун йӑваш куллине,
Эп тытрӑм ун ӗҫчен аллине;
Вӑл хамӑр пек ҫынах иккенне
Эп туйрӑм пӗр сӑмах чӗнсенех.
Анчах ман кил, ман ҫӑкӑр тӑвар—
Йӑлтах унран килен пархатар.

Ман харсӑрлӑх, ман вӑй, хал-хавал
Аҫтаччӗ вӑл кунчухлӗ авал?
Эп ҫамрӑкчӗ, анчах чӗмсӗр чун
Ватсупнӑ пек йӳтетчӗ унчух.
Эп ватӑ халь, анчах эп хастар,
Хаҫтарлатать мана пархатар.

Кунҫул ани яка йӗтем мар,
Ыр ут та пултарать такӑнма.
Ҫитмен ӗмӗтсене ҫитерсен
Тикӗсленет кунҫул та иккен.
Мана тек нимӗн те кирлӗ мар,
Эп куртӑм чи паха пархатар:

Эп куртӑм Ленина Мускавра,
Кам хаҫь „вӑл ҫук“ теейӗ вара?—
Эп куртӑм Мускавра Сталина,
Вӑл пирӗншӗн паян Ленинах.
Нумай кунҫул ӑна пил тӑвар,
“Нумай кунҫул, тулли пархатар!“.

## Инспектор

Сар Миккенĕн ватти çитнĕ.
Канмалла пек кăшт. Анчах
Ĕмĕрне ĕçленĕ çыннăн
Аллиех кĕçтет-çке çак.

Е курать вăл: тислĕк хулăм
Хăш вите урайĕнче,
Уншăн ăш вăркать, е улăм
Купалать анкартинче.

Е ана çинче вăл трактор
Патĕнче маташкалать:
Тĕплĕреххĕн сухалатăр,
Тет пулас,—чавса пăхать.

Ĕç кунне ӳстерессишĕн
Тен çунмасть те вăл питех,—
Сар Миккенĕн килĕ-йышĕ
Вĕллери хуртпа пĕрех:

Ывăлсем, кинсем, вĕсенĕн
Ачисем,—хушса ĕлкĕр!
Пурнăç çăкăрлă старикĕн,
Колхозĕ—миллионер.

Хăй çапла этем вăл ахăр:
Урлă выртана ялан
Тăрăх çавăрса хумасăр
Халиччен ун чун канман.

Председатель асăрхавлă,
Çынсене чухлать иккен:
„Чин парас-ха ватăлмалăх
Кунĕнче,—тет,—старике.“

Ак хайхи, çураки умĕн,
Вăл калать ăна пĕрре:

„Эс инспектор пулăн пирĕн,
Пахалăх инспекторĕ“.

Старик, тем асилнĕ евĕр,
Пуçне усрĕ аяла...
Ĕлĕк çут тӳмеллĕскер пĕр
Килсе кĕнĕччĕ яла.

Шкул пăхмашкăн килнĕ тетчĕç,
Çавна çав сăмахпала
Чĕннĕ пек вăл сĕмлекетчĕ...
Те ку мăшкăллать капла?

„Кушакпуç инспектăрлăхăм
Пур-и манăн!—тет,—Миккен.—
Çĕр ăманĕ эпĕр, шăллăм,
Тăпраран хăпман хальччен.

Ун пекки пиртен пулать-и!
Мĕн, кулас тетрим элле?“
„Çук,—тет председатель,—ма?—тет,—
Ма кулас?—тет,—эс игле.

Ак, пример, Ванюк пур пирĕн,
Тракторист. Анюк та пур.
Анюкпа Ванюк пит мирлĕн
Сухалаççĕ, калăпăр.

Леш Анюкăн куçĕ—çиçĕм,
Яш пăхать те йĕкĕте
Мăч хупать вăл тĕлкилӳçĕн,
Ну—йĕкĕт çакланчĕ те.

Çаврăнса пăхсах вăл ака,
Руль мансах, шăлне йĕрет.
А машина кукăр-макăр,
Тайлăк-тайлăк сĕтĕрет.

Юрату юрлаттарать, тет,
Хĕстĕрех-ха вăл куçне.
Анчах шăйрăк ан хăвартăр
Ăнсăртран ана çине.

Эс, Миккен пичче, тухан та
Тĕрĕслен: начар иккен—
„—Йышăнмастăп,—тен,—сухалăр,
Савнă măшăр, çĕнĕрен!“

Çыннисем вĕсем ман ылттăн,
Эп пример калатăп-ха.
Ĕç тирпейлĕ пултăр пирĕн,
Пултăр ĕç таса, паха.

Çавăнпа пахалăх тенĕ,
Эсĕ—ун инспекторĕ,
Эс—ăна тĕрĕслекенĕ,
Пуçлăх эсĕ пĕр тĕрлĕ“.

—„Э...ĕçне ăна ĕçлетпĕр,—
Тет Миккен,—вăл хамăршăн.
Уншăн мĕн ытлах инспектăр
Темелли...эп тăрăшăп...“

Анчах хăй старик йăлт урăх
Çав ята илтнĕренпе.
Пилĕкне раснах вăл тÿрĕ
Тытнă пек, мăнаçлă пек.

Култармасть, кулмасть алхапăл
„Юмах яр, мучи“тесен.
„Шухăш пысăк,—тет вара вăл,—
Халăх ĕçĕ, ачамсем“.

1939.

## Тантăшсем

Ик старик тĕлпулчĕçĕ,
„Сыпнă“ иккĕш те, куран.
Шăппăн çĕлĕк илчĕçĕ,
Ала тытрĕçĕ унтан.

Тинкерсе пăха-пăха,
„Пит аван-и“ вырăнне,
„Эс халь те вилмени-ха?!“
Терĕç харăс пĕр-пĕрне.

„Ара эп сана шеллеп,—
Тет пĕри,—пĕччен епле?“
—Эп те çав кичем пуль теп
Пĕчченӗх кайма,—тет леш.

Лăх-лăх кулчĕç ватăсем:
„Эх, аван та пурнăçĕ,—
Сайралаççĕ тантăшсем:
Ватăлатпăр пулĕ çав...

Астăватни Порт-Артур
Патĕнчи тамашана?
Илме илчĕç те, ай тур
Вĕри килчĕ тăшмана!..

Ну вăрçрăмăр та вăрçа!
Эс митал та çав çулне
Илтĕн-ха вĕт, пур-и çав?
Çаккалатни кучухне?—

„Те юрать, те юрамасть,
Тетĕп-çке те...праçникре
Çаккалап-ха. Урама
Пит тухман. Килте, пӳртре“.

—Çак эс, тух эс урамах,
Кĕвĕçтер çамрăксене.

Тĕнче паттăрсăр тăман,
Пĕлччĕр пирĕн йышшине!

Хам эп Ворошиловран
Ыйтас тенĕччĕ-ха та
Тепĕр хут илме çара,—
Ывăлсем кулаç тата.

Кĕçĕнни ман шăп лере—
Хамăр çапăçнă тĕлте.
Леш яппун каллех пĕрре
Кăшт ашкăнкалана, тет...

Шухăшлап та—темĕншĕн
Мансăр ĕç тухмасть пекех...
„Иртнĕ пулĕ, тантăшăм!"
—Иртнĕ тетĕн? Эк, инкек!

Е миталсăрах çĕре
Выртмалла пулать-тĕр-и?...
Атя-ха, пӳрте кĕрер,
Ăстарам юр-ай сăри...—

Чĕнсе кӳртрĕ хăй килне.
Пĕр старикĕ теприне.
Ченекенĕ—Сар Миккен,
Пахалăх инспекторе.
Леш—утар ăçти иккен,
Кӳршĕ ял, Чăм Нестĕрĕ.

Хирĕç пулчĕ тараса
Умĕнче ват карчăкĕ:
«И! старик!—тет,—ара сан
Куç-пуç алчăрана-çке.

Ялта ятлă çын пулса
Пурăнатăн ху çапах,
Кăшт пĕлесчĕ намăса
Инĕçпехтăр пуçупа.

Пуçлăхсем тем калĕçĕ,
Халь вĕт çимĕк те çитмен".

—Чим-ха, карчăк, ман ěçе
Ан пěл-ха эс, —тет Миккен.—

Çимěкчен-ха тем пулас,
А паян—пěрремěш май,
Ěç уявě, как калас,
Вăхăт сан кăшт чухлама.

Мěн тěшмěшленетěн эс?
Инěçпехтăр мăшрине
Ку пěрре те килěшмест...
Яр-ха нÿхрепе кине.—

Ик старик кěрекере
Калаçаççě тěрлěрен.
Анчах тухмěç йěркерен
Çав илемлě ватăсем.

„Акапуç тытма ансат,
Алтăрна тытма вěрен:
Ан хуплатăр вăл ăса!"
Тенě çав мěн ěлěкрен.

„Начар çеç улпут та, тусăм,
Апат умěн пěр черкке
Яратех, тет...пирěн çук-им?!
Тулли мар-им кěреке?

Кучухне улпучě—хамăр:
Юрлă-варлă халиччен,
Хуртлă-хăмăрлă тăратпăр.
Тав сана!"—тет Сар Миккен.

Сав мача!—тет Нестěр тантăш.—
Пурăнатпăр-ха ара.
Колхозăмăр сан та, ман та
Чапа тухрě таврара...—

Стариксем кăшт хěрнě те,—
Сарă кин шав ěçтерет.
Ывăлин ачи пÿрте
Пěр хаçат илсе кěрет.

—Асаттеǃ—тет хӗрлӗ галстук
Çыхнă сарă пионер.—
Эп сана хыпар калас тăк—
Ӗçмӗн урăх ӗмӗрне.

„Мӗн апла?“—Сана ӗçченшӗн
Медаль панă. Ак хаçат.
Алă пуснă хăй Калинин.—
„Ан калаç! Чăнах-и çак?

Ăсса тух тепрер кăкшăм,
Кин, кук пек телейпелен!
Ку—Калинин тантăшшăн
Пултăр!» терӗ Сар Миккен.

1940

## Харсăр ăмăрткайăк

Чăваш халăхĕн паттăр ывăлне, Совет Союзĕн Геройне—Ф. Н. Орлова.

Ял-ял урлă, хула урлă,
Ту, вăрман, уй урлă
Вĕçет пирĕн ăмăрткайăк
Ывăнми, хăюллă.

Вĕçет шур пĕлĕтпе тан вăл,
Е унтан та çӳлĕ.
Вĕçет вутлă çумăр витĕр,
Çăмăл мар ун çулĕ.

Çиле хирĕç, çиле майлăн
Варкăшать çуначĕ.
Тăшмана курать таçтан вăл,
Куçĕсем çунаççĕ.

Ун çинчен юрлаççĕ юрă,
Халлаплаççĕ шуха:
Ăна сăнă тивмест, теççĕ,
Тивмест, теççĕ, ухă.

Аçа-çиçĕмĕн кумать вăл
Тăшман пуçĕ çийĕн.
Аçа чулĕ пек анать вăл
Хар-хаяррăн, çиллĕн.

Каçару мĕнне пĕлмест вăл,—
Тавăру!—тет юнĕ.
Парăну мĕнне пĕлмест вăл,
Çĕнтерӳ ун кунĕ.

2. Çĕнтерӳ юрри.

M23121-493

Чувашская республиканская БИБЛИОТЕКА им. М. ГОРЬКОГО

Йывăрри те уншăн çăмăл,
Аякри те çывăх.
Тав тăвать ăна çĕршывăм,
Сунать ырлăх-сывлăх.

Тав тăвать ăна пур халăх:
Тайма пуçăм, тайăн...
Сывă пултăр, сывă пултăр
Харсăр ăмăрткайăк!

## Аннене

Каçсерен сывлатăн ассăн,
Асăнман çĕр çук.
Таврăнмассăн, таврăнмассăн
Туйăнать хăшчух...

Сан сĕтне тумлам-тумламăн
Астăвап, анне,
Мĕншĕн йăпшăнмăттăм мамăк
Çунату айне?

Анчах пурте—ывăл-ар-и,
Хĕр-и—пĕр пилре.
Куçраҫ пăхрĕ, ыталарĕ
Пĕр анне пире.

Вăл—асаплă та суранлă,
Çапах ĕмĕр сыв,
Эпир иксĕмĕр çуралнă
Сарлака çĕршыв.

Çав аннешĕн кĕрешмешкĕн,
Пăшала-туппа
Чуптуса, эпир пиншерĕн
Турăмăр тупа.

Çав аннешĕн ăнсăртран эп
Пуçăма хурсан,
Чăн, вара тен таврăнаймăп,
Айăп ан тусам.

Ачаран эс вĕрентеттĕн,
Лайăх астăвап:
Амăшне хисеплесессĕн—
Ĕмĕрлĕх сăвап.

Хĕрлĕ пурçăн ялав айĕн
Чĕркуçланнă чух

Туйрӑм эп: ҫӗршывсӑр манӑн
Пур аннем те ҫук.

Ҫӗршыва кирек хӑҫан та
Чап, хисеп манран,
Ма тесен унта пурнатӑн
Эс, аннеҫӗм ман!

1942. Сталинград фрончӗ.

## Ман Ҫăлтăр

Ман чатăрăн ҫĕтĕкĕнчен
Пăхать пĕр ҫăлтăр каҫсерен.

Ҫил кĕрĕ, тумлĕ шыв, пĕлеп,—
Ҫав шăтăка сапламăп эп.

Мĕскер тăвас! Поэт-салтак.
Сантименталлă ҫав пăртак.

Шанас килет: ман ҫăлтăр вăл.
Манран ниҫта ан юлтăр вăл.

Ăҫта пулсан та эп—часах
Мана вăл туптăр шыраса.

Вакун чӳречинчен пăхса
Мана вăл ятăр ăсатса.

Палаткăра е окопра
Манпа вăл пултăрччĕ вара.

Разведкăна е хурала
Манпа вăл тухтăр каҫпала.

Эп аманса ӳкес пулсан,
Мана вăл пăхтăрччĕ куҫран.

Эп пуҫиллех выртса юлсан,
Ҫав ҫăлтăр хуптăр ман куҫа.

Куҫа вăл хуптăр та манне,
Каллех хăпартăр тӳпене.

Пĕрне пĕри тек туламан
Йăхсемшĕн ялкăштăр ялан!

1945.

## Мунча шăрши

Хурăнлăхран мунча шăрши кĕрет,
Чăваш мунчи шăрши.
Ай-хайччĕ, çапăнасчĕ те пĕррe!
Хăçан кĕрĕпĕр-ши?

Хăçан Çавал, Пăла, Сăр хĕрринче
Салтак тар-кирĕкне
Ура тупанĕ чул пек хĕриччен
Сĕвелĕпĕр иккен?

— Час, лейтенант юлташ, нумаях мар,—
Тет ординарец ман,—
Паян мĕнле кăтартрăмăр-ха шар!
Пусмассерен тăшман!..—

Каç кӳлĕм тупă ахăрчĕ тепре.
Пăшал тĕрĕслесе,
Чăваш калать: пар ăшшине шепрех!
Тĕп пулччăр фашистсем!

1943. Брянск вăрманĕсем.

* * *

Ҫиле хирĕҫ ҫӳрен ут юртать,
Ҫамрăк йĕкĕт васкатать ута.

Йĕпе юр ҫăвать, ҫăвать, ҫăвать...
Куҫкĕрет ута хушка тăвать.

Йĕкĕт анчĕ пĕр блиндаж умне,
Хыр ҫумне кăкарчĕ вăл утне.

Палламарĕ, хушкине кура,
Аллипе шăлса тăкать юра.

Ҫӳрен ут, куҫран пăхса ăна,
Кĕҫенсе илет кĕскен кăна.

Кĕрсе кайрĕ йĕкĕт блиндажа,
Пуҫ ухса юлать вĕри лаша.

Йĕкĕт хыврĕ юрлă ҫĕлĕкне,
Кĕсъинчен кăларчĕ тĕкĕрне:

Ик тăнлавĕ унăн шап-шурах,
Кам шăлас ҫав ирĕлми юра?

1943.

* * *

...Пӳртне-и? Вучахне те хăварман
Кĕл çех пăрăлтатать кĕрхи çилпе.
Çапах та пурнăç...пурнăç чарăнман.
Калай листи çинче ыраш типет,
Ăна кăларнă вăрттăн шăтăкран.
Çынсем паян тин таврăннă ирпе,
Пытарнă вĕсене хура вăрман.
Çарран. Çийĕсенче çĕтĕк кĕпе.
Кăлтăртатать сулмаклă аларман,
Ăна çаврать ĕшеннĕ хĕрача,
Кулсан шупка шăлтунине куран.
Мĕнрен кулать?—Пĕлет пĕр хăй, анчах.
Камран кулать?—Кăна эс те чухлан:
Кулать вăл пархатарсăр тăшманран.

1943. Орел облаçĕ.

## Эльгере. Чăваш поэчĕсене

(Халăх поэчĕ С.В. Эльгер 50 çул тултарнине хисеплесе).

Нумай-и пурнăçăм, сахал-и,
Пăхассăм çук калла-малла.
Сана тытма эп тивĕç алă,
Салтак пиччемçĕм, салтакла.
Пĕрре килет этемшĕн аллă,
Пуртех çитеймĕпĕр алла.

Вут-çиллĕ, кĕллĕ-хĕмлĕ тапхăр!
Ăша çунтармăш самана!
Кам юнлă чўклеве юраттăр?
Сана вăл тунсăх е мана?
Анчах вутран ўсет çĕн паттăр,
Юнран, кĕлрен аталанать.

Сĕм пĕлĕт витĕр тавракурăм
Уяррăн çĕклевет умра.
Ăна эп халь мухтаймăп юррăн,
Ман юррăм: „малалла! урра!"
Ăна çĕклет ман пилĕк-çурăм,
Çывăхартать ман ал-ура.

Курап, курап çĕршывăн аслă,
Тулли, паха кĕрекине.
Куратăп халăхăн пуласлăх
Ытарайми кĕнекине.
Шанатăп, халь тĕлпулмасассăн,
Унчух пĕр чыс тивессине.

Тавсси, поэт! Пуçламĕш пусăм
Пĕр ман çеç мар сан чĕрçинче.
Паян сан уявна эп, тусăм,
Чыслатăп вăрçă хирĕнче.
Анчах, ăçта пулсан та пуçăм,
Ман чунăм Атăл хĕрринче.

Десна та Сож, Нева та Днепр...
Мӗнле шыв урлӑ эп каҫман!
Кашни хума вӑрҫса илетпӗр,
Унпа илемлӗ пур ҫыран.
Ҫапах та Атӑл шайлӑ тепӗр
Шыв-шур курман эп ку таран.

Тахҫан, сӗм авалах, ят панӑ
Чӑваш хӑй чӗлхипе ӑна.
Унта ҫуралнӑ-ҫке, тӑванӑм,
Вилес килет унта кӑна.
Унта этемлӗх курман Канны
Кӑтартрӗ халӑх тӑшмана.

Салтакчӗ эп. Историк куҫӗ
Ялхахланатчӗ тӗтӗмпе.
Куҫа ҫеҫ мар, чуна та йӳҫӗ
Пулатчӗ, тен, вӑхӑчӗпе.
Анчах пӗр шухӑш: „Хамрӑн ку ҫӗр!"
Пуҫра ҫиҫетчӗ ҫиҫӗм пек.

Курап, курап ҫӗршывӑн аслӑ,
Тулли, паха кӗрекине.
Куратӑп халӑхӑн пуласлӑх
Ытарайми кӗнекине.
Итле, тӑван йӑх, паттӑр саслӑ
Ывӑлусен кӗввисене!

1944. Польша.

## Саламни

*Пӗчӗк хӗрӗме*

1.

Пӗчӗкҫеҫҫӗскерӗм!
Ма эс пысӑк мар-ши?
Ҫыраттӑн чиперрӗн
Кунсерен пӗр аршӑн.

Салтака манмашкӑн
Епле эс пултарӑн?
Вӑл сана ачашшӑн
Асӑнать, мӑнтарӑн.

Ун лутра ҫӗр пӳрчӗ
Санпа ҫеҫ илемлӗ.
Кӳр чуппине, кӳрччӗ!..
Вилӗм тек килеймӗ.

2.

Чӗвӗл·чӗвӗл чӗкеҫсем
Ларчӗҫ бруствер хӗррине.
Алӑ вӗҫҫӗн ҫӗклесе
Чӗкеҫрен чӗлхе илме
Эп сана вӗрентеймерӗм.
Каҫарах, пӗчӗкҫӗскерӗм!

Вӗлле хурчӗ тутанать
Ҫеҫпӗле те ухлӗме.
Сим кӳмешкӗн тутана,
Ҫу пек ҫепӗҫ пуплеме—
Пылпа ҫу эп сӗреймерӗм.
Каҫарах, пӗчӗкҫӗскерӗм!

3.

Кунӗн-ҫӗрӗн ҫумӑр, ҫумӑр,
Тӑхлан ҫумӑр пуҫ ҫинче...

Эс, юрать-ха, çумма-çумăн,
Эс, юрать-ха, пит инçе.

Хăш чухне эп, ывăнсассăн,
Сан сăнна пăхатăп та—
Çĕкленет каллех ман сассăм,
Ватăлма каллех тăхтап.

Хăш чухне, стройра пырса та,
Юнпа хытнă çӳçсене
Эп куратăп та—сасартăк
Тăп тăратăп, çӳçенеп...

Кунĕн-çĕрĕн çумăр, çумăр,
Тăхлан çумăр пуç çинче...
Эс, юрать-ха, çумма-çумăн,
Эс, юрать-ха, пит инçе.

4.

Урамра çилсем кумаççĕ,
Шăтăк-шăхăр шăхăрать.
Иксĕрех эсир кун-каçĕ,
Япăхатăр, ахăрах.

Кив тетте те пушă аркă,
Кам кӳрес-ха çĕннине?
„Чăвашла юрласа пар-ха“,
Тетĕн эс асаннӳне.

Асаннӳ юрлать... Пĕлесчĕ:
Мĕн юрлать-ши ватăскер?
Ман пуласчĕ пĕчĕкçеççĕ,
Çип-çинçе те кĕп-кĕске.

Ман халлап-юмах итлесчĕ,
Сывламасăр, санашкал.
Савăнса вĕçне çитесчĕ,
Сĕтĕресчĕ çунашка.

Халь ак эпӗ, итлесен те,
Манас çук салтак хӗçне.
Вӑрçӑ юмах мар иккен те,—
Ман пӗлесчӗ ун вӗçне.

Анчах эп пӗлеп, пӗлетӗп:
Халлапла кирек мӗнле,
Эс пур чух вӑрçӑ вӗçне те
Чӗррӗнех эп çитмелле.

5.

Салампи! Паян кӗрешрӗ
Икӗ кайӑк кӑнтӑрла:
Пӗри хуп-хура хӗреслӗ,
Тепри хӗрлӗ çӑлтӑрлӑ.

Хӑваларӗç, кар-карларӗç,
Сахрӗç хытӑ пӗр-пӗрне;
Чикӗм пуçлӑ кускаларӗç,
Кӗç ӳкмерӗç çӗр çине.

Окопран пӑхса выртатпӑр
Хӑш палли çӗнтерессе.
Кӑшт тӑрсассӑн хӗрлӗ çӑлтӑр
Вут хыптарчӗ хӗресе.

Персе анчӗ леш, хӗресӗ,
Тӗтӗм-çулӑм кӑларса,
„Пултаратӑн, çӑлтӑр, эсӗ!"
Терӗç пирӗн харӑсах.

Салампи! Пӗлетӗн ӗнтӗ:
Çӑлтӑр-кайӑк чи вӑйли.
Кучченеç те вӑл, тетте те
Илсе пырӗ сан валли.

6.

Эс çуралнӑ хулана
Тӑшман илнӗ çавӑрса.
Çывӑрсам, ан кулянах:
Парӑнмасть вӑл. Çывӑрсам.

Эс алхаснă пӳлĕмре
Сивĕ, тĕттĕм, пуш-пушах.
„Çывăр, килĕн ӳлĕмрен",—
Тет резин упа, кушак.

Эс çӳренĕ пахчана
Халь ӳкеççĕ егресем.
Пĕр турат та тăшмана
Пуçне таймĕ. Тĕлĕрсем.

Эс чӳхеннĕ шыв-шура
Пăтратаççĕ ют çынсем..
Вăл тасалĕ, ан хăра:
Пулмĕ юшкăн та вĕçен.

Уйăх чăмрĕ Атăла.
Аякра сăпку халь сан.
Эп тасатрăм пăшала.
Çывăр, çывăр лăплансам...

7.

Ах, яту хитре-çке санăн!
Тупса хунă мĕн такам...
Тӳррипе калас пулсассăн,
Кĕвĕçеп: пăртак, ачам.

Санятна эп асăнсассăн,
Тин пусап вунсаккăра.
Халăх çамрăклăхĕ мавăн
Куç умне тухса тăрать.

А пĕлетни эс, чиперĕм,
Тутаркас таврашĕнчи
Салампи ятлă пĕр хĕрĕн
Кунçулне? Тăхта-ха, чим...

Юрăсти пулнă аппу çав,
Пуçлăх пулнă уявра.
Ку сахал: вăл пăлхав пуçĕ
Пулнă, теççĕ, каярах.

Те ҫӗр ҫул, те икҫӗр ҫул-ха
(Пелме ҫук тӗрӗссине)—
Чӑвашсем пӑлханнӑ шухӑ
Аслӑ Атӑл хӗррипе.

Атӑл урнӑ: „кам кама-ха!“
Хӳнӗ вӑл шыв хӳмесем.
Ҫӑварлӑхланӑ урхамаххӑн
Шӑлне йӗрнӗ хумӗсем.

Хуҫасен кимми тавраш
Ваннӑ, путнӑ куҫ курах.
Путнӑҫем хуҫи павраш:
„Тур ҫырлах! Шуҫи хурах!“

Ват юманлӑх кӑмӑлланӑ
Яш ҫилле вӗчӗхтерсе.
Юмансем пуҫне суллана
„Парӑнмастӑпӑр!“ тесе.

Эс пӗлетни—ҫуллахи ҫӗр
Чи яштак юман ҫине,
Чи ҫӳле ҫав Салампи хӗр
Шур пӗркенчӗк карнине?

Халӑха ҫапла пуҫтарнӑ—
Пуртӑпа та сенӗкпе
Улпутсен, мӑрса-турханӑн
Мӑшкӑлне пӗтерес пек.

Анчах ҫичӗ хут капланнӑ
Мӑшкӑл пирӗн мӑй ҫине.
Саламшн ӗҫӗ хупланнӑ;
Ҫитеймен вӑл хӑй вӗҫне.

Тӑшман ҫарӗ ухӑланӑ,
Ҫурнӑ шур пӗркенчӗке.
Темӗнчухлӗн тыткӑнланнӑ,
Пӑлхав пуҫӗ те лекет.

Пуҫилле ӑна ӑсатнӑ
Инҫетри сӗм вӑрмана.
Ун ятне манман асаплӑ,
Тертлӗ халӑх, самана.

## Çуркуннен туйӑнмасть-и сире?

Тӑвансем! пилĕк-çурӑм тӳрлентĕр:
Кĕтсе илтĕмĕр канлĕ ире.
Саралса çывхаран кĕркуннемĕр
Çуркуннен туйӑнмасть-и сире?

Çулçӑсем савӑнса çӑтӑл-çатӑл
Ала çупнӑ пек мар-и пӑхсан?
Кĕрхилле хумханан тӑван Атӑл
Тӑрӑлса йӑл кулмасть-и паян?

Пĕр-пĕрне тинкерсе сӑнасамӑр:
Мĕн тери ӑрӑскал пит-куçра!
Паянхи туйӑма, самананамӑр,
Çуралас ĕмĕрсемшĕн усра.

Портретсем çинелле пӑхӑр халĕ:
Кӑмӑлсем урӑхланнӑ йӑлтах.
Шухӑшпа шуралса, пыран Сталин
Çамрӑкланнӑ пек мар-и пӑртак?

Иксĕлми чĕрĕлӳ пархатарĕ
Час сыватĕ çĕршыв суранне.
Ĕмĕте юрӑпа янратар-и,
Кайтӑр юрӑ тенчен çур анне!

3. IX. 45

## Пурăнах, Чăваш çĕршывĕ!

Ят тухнисемпе пĕрле эп
Çĕрпӳрен çуран уттартăм.
Кăнтăрла кăшт сулăнсассăн
Ушкăн çитрĕ Апаша.
Шăкăрах чăваш çеç марччĕ,
Пурччĕ вырăс та, тутар та,
Казахсем те кавказсем те...
Пире кĕтвĕ тамаша.

Çураки пĕтернĕ майăн
Апашсем уяв пуçарнă,
Колхозпа та, килсерен те
Хатĕрленĕ кĕреке.
Хирĕç тухрĕç хĕрупраçĕ,
Хуйхине кăштах пусарнă
Арсăр арăм, вата-вĕтĕ,—
Ак мĕн юлнă тĕреке.

Çав-çавах (ăна эс ан пăх!)
Сухаланă, сӳреленĕ.
Районра пĕрремĕш вырăн.
Пĕлтĕртен те кая мар.
„Чăваш мар-им эпĕр?!" терĕ,—
Тăххăрти пĕр шăлйĕренĕ,
Пуçĕнче çĕмел пек шлем ун,
Ывçинче вăрттăн чикар.

...Хирĕç тухрĕç. Сирĕлеççĕ
Питшăллийĕ, чĕрçиттийĕ.
Витре хăлăпĕ чанклатрĕ.
Ерĕхет çĕнĕ сăра.
„Тав сире!" тет председатель—
Тен, пĕртен пĕр вăйпиттийĕ.
„Сĕврĕлмен-ха, тин йӳçет,—тет
Ял асламĕш,—тав Çара!".

„Тарават иккен çĕршывĕ,
Сарлака чĕреллĕ халăх!"
Теççĕ пурте пĕр çăварлăн,
Кăшт хĕрсессĕн кинетех.
Эп те тав курки ĕçетĕп.
Эп чĕнместĕп. Эп мĕн калăп?
Халăха мухтав тусассăн,
Вăл мана та тиветех.

Ман пĕр шухăш, ман пĕр ĕмĕт:
Йĕрсĕрех çухалас марччĕ,
Тен мана та пурнăç картĕ,
Юррăм çĕклĕ халăха.
Çав хăюлăх вăй паратчĕ,
Урăм-сурăм вăрçă-харçă
Сăвăçа пăшал тыттарчĕ,
Эп каятăп салтака.

Туп-тулли колхоз карташĕ.
Ротипех кĕрсе ларатпăр.
Тăп-тăр урă кĕрекеçĕ
Рет хывать сума суса.
„Шăрттанне хисеп тусамăр,
Чăкăтне çыртарах парăр!"
Тет пĕр сакăр ача амĕш,
Йĕпсепе илсе хурса.

Ĕçтереççĕ те сăйлаççĕ—
Каварлашнă пурте, калăн:
Кăмăлçах карчамассем те,
Ĕххĕмшăл чĕлĕмçĕсем,
Салам куçлă çĕнĕ çынĕ,
Йĕкĕр майăр пек туталлă
Хĕрĕсем-çке, ăш çунтармĕш,
Юн вĕретмĕш хĕрĕсем!

Тĕлĕнсе пăхса сăнаççĕ
(пуртăрах çав сăнамалăх!)
Белорус хĕрĕ-хĕрарăмĕ,
Еврей ачи-пăчи.

„Пархатарлă мĕн çĕршывĕ!
Вашават иккен ку халăх!“
Тег, вăрçа пула, чăвашăн
Чыс-сайне тутаннă çын.

Пехиллерĕç, ыра сунчĕç.
„Пĕттĕрех тĕнче хурахĕ!“—
Ылханланчĕ йăмра айĕн
Халăх тарăхĕ, хурри.
Лейтенант командăларĕ
Чĕкеç куçлă пĕр хура хĕр,
Ман çине питех пăхмасăр,
Мана сĕнчĕ çул курки.

Ун ятне эп астумастăп,
Астумашкăн пĕлеймерĕм,
Ыйтаймарăм, каламарĕ,
Ахăрнех пуль вăтанса.
Унпала аса илетĕп
Сан сăнна, çуралнă çĕрĕм,
Куçăма эс курăнатăн
Çамрăк ĕмĕтлĕ, таса.

Сан сăнна эп илсе кайрăм,
Сан çинчен эп шухăшларăм,
Йывăр-йывăр сехетре те
Эп йăпантăм санпала.
Çавçавах-ши эс, çĕршывăм,
Сăртлă-варлă Шупашкарăм,
Тăнăç-канăççăр шывăшурăм,
Муллă Атăлăм?—Кала.

Никама та ют темерĕн,
Хапăл турăн эс халçемĕн:
Украина юрçисем те,
Латышсем те сан çинчен
Чунлăн-варлăн асăнаççĕ,
Кĕвĕлеççĕ çĕнĕ çемĕ.
Хурçă пекчĕ пирĕн пĕрлĕх,
Халь алмас вăл пур енчен.

Ывăлу-хĕрне эп куртăм,
Пултаратăп каламашкăн:
Сан ятна вĕсем çĕртмерĕç
Çĕр çуран çапăçура.
Ирĕке иленнĕ халăх
(Хĕç чуптурăмăр çĕршывшăн)
Нихăçан та, никама та
Пулмĕ,—терĕмĕр,—чура!

Çутçанталăка ишес пек
Артиллери тупăлатчĕ.
Вилĕме куçран пăхан та—
Чăмăртатăн пăшала.
А сержант калать: „атьсемĕр,
Ахăрнех ку пирĕн Лаптев,
Чăвашла юрлать снарячĕ,
Çĕмĕретпĕр, ан шарла!“

Танк каччи шăла çырттарчĕ.
Ик чăваш ачи пуплеççĕ:
„Хăшĕ пулĕ çав Ширманов,
Çав картин çинчи Энтри?“
—Пĕлейместĕн-им, мăнтарăн?
Чăвашран йăхман пуль эсĕ!
Чи малти, шăллăм, Ширманов.
Чи питти вăл,—тет тепри.

Ăсанать юнпа тар кунĕ,
Карăнать каçхи шăналăк.
Тĕлĕретни, тĕлĕрместни,
Флягăран кăшт шыв çăтса,—
Самолет сĕрлет сулмаклăн:
„Ку—Орлов, ку Ăмăрткайăк!“—
Тетпĕр, плащ-палатка айĕн
Кайăкла куç ывăтса...—

Çук, чăваш ятне çĕртмерĕ
Ывăлу-хĕрӳ, çĕршывăм!
Ӳкермерĕ санăн аслă
Пехилне хура çĕре.

Ахаль мар эс çитĕнтертĕн
Танлăн, тӳсĕмлĕн те сыввăн,
Чăнкă Атăл хӳмĕ çийĕн
Чăпăлкка туса, пире.

Ахаль мар яту сан юррăн
Янăра тăрать çав халĕ
Ленин—Сталин саманийĕн
Çут хĕвелĕ айĕнче.
Пурăнах, чăваш уй-хирĕ,
Сĕм вăрманĕ, ешĕл ялĕ,
Йăлăм-улăхĕ, шыв-шурĕ...
—Чăвашла пĕчĕк тĕнче!

Пурăнах, сăнтан сăпайлă,
Ăспа тарăн, чунпа анлă,
Сăнавпа шап-шур сухаллă,
Кăмăлпа ача пекскер!
Пурăнах, кун çул йĕтемĕ
Çийĕнче тăпачăланнă,
Лутăрканнă, шĕкĕлченнĕ,
Çапах тĕшлĕ те йĕкер!

Пурăнах, ĕçре çуралнă,
Ĕçпе ĕмĕр ĕмĕрленĕ,
Куç хупсан та виçĕ кунлăх
Çĕр çинче ĕç хăваран!
Сан тару паян ахаххăн,
Сан юну паян мерченнĕн,
Çĕнтерӳ пусĕашăлне эс
Илемлетрĕн çынпа тан.

Сухаçу та, тимĕрçӳ те,
Пахчаçу та, пулăçу та,
Юрăçу-кĕнекеçӳ те
Санăн тытнăччĕ пăшал.
Антăхан тăшман тĕп пулчĕ,
Пирĕн пурнăç пулĕ çутă,
Хальхинчен вăл çĕршер хут та
Пулĕ тухăçлă, калкал.

Сан çине ӳкмерӗ бомба,
Сан куçна касмарӗ тӗтӗм,
Сан ӳтне клеме пусмарӗç,
Ма тесен сан салтаку
Сталинград вут çумӑрне те,
Ленинград тертлӗхне те,
Кӗрхи Днепр сиввине те —
Тӳсрӗ саншӑн. САНШӐН ку!

Тӗнче касрӑм сахал мар эп,
Çитсе куртӑм юталла та,
Мӗнлерех çак юррӑма ман
Вӗçлесе парас сире?
Сӑмаха пит çӗклемесӗр,
Каламашкӑн пултаратӑп:,
Тем тесессӗн те, атьсемӗр,
Лайӑх ХАМӐР Раççейрех!

1945

## Çĕнтерӳ юрри

1.

Çĕнтерӳ юрри пуçлатăп.
Тултарсамăр куркăра,
Кăпăклантăр пыл сăра!

Иртĕр, ларăр тĕпеле,
Итлĕр чун-чĕрепеле,
Кăна пурте пĕлмелле.

Камăн ĕмĕт малалла—
Çавăн уççăн манпала
Ярăнса юрламалла.

2.

Эп пăхатăп Сталинградăн
Медальне асăрхарах.
Паян кун вăл бриллиантăн
Çутатать ман кăкăра.

Шупка симĕс лента маншăн
Изумрудăн курăнать.
Тинкерсе ăна пăхсассăн,
Дон хумханнăн туйăнать.

Хĕрлĕ йĕрĕ—чăн рубинăн,
Çук унтан таси, çутти:
Çав йĕрпе Çĕнтерӳ пынă
Атăлтан Рейна çити.

3.

**Ах**, вĕриччĕ-çке çав август!
Ĕннĕ курăк. Шывсăр кавăс.
Эшелон силлет пире:
Лăстăр-лăстăр. Сăвăр, авăс,
Сапала çеçенхире!

Хӗвелҫаврӑнӑш чечекӗ
Ҫаврӑнать хӗвеле май.
Станцӑ. Кӑркӑс-и, узбек-и—
Кӗсъинчен кӑларчӗ пекӗ,

Тытӑнать вӑл хырӑнма.
„Сывлӑш!" тет Хусан тутарӗ
Юриех. Леш хускалмарӗ,
Тавӑрать ҫапла кӑна:
„Насретдин хуҫа каларӗш—
Эп мулла-им?—Мӗн мана!"

Шӳтлӗн-тертлӗн марш пуҫланчӗ,
Кӗреҫе аври хистет.
Хӗтӗртет пӗр чӑрсӑр шанчӑк.
Нимӗҫе эпир курманччӗ.
Ну... курман-ха нимӗҫ те!

4.

Утмӑл ҫухрӑм утнӑ хыҫҫӑн—
Хуп-хура та йӗп-йӗпе;
Паллашатпӑр вӑрҫӑн выҫкӑн,
Чалӑш шӑл-ҫӑварӗпе.
Самантпа сывланӑ чух
Ҫӑвӑнма та вӑхӑт ҫук.

Вӑтӑршарӑн, хӗрӗхшерӗн
Ҫӗкленеҫҫӗ ҫӑхансем.
Кунӗн-ҫӗрӗн, кунӗн-ҫӗрӗн...
Ҫутҫанталӑк сӗм тӗксӗм.
Эх, мӑнтарӑн кӗреҫе!
Ма эс ансӑр?—тетпӗр ҫех.

Анчах ҫӗрӗ чул пек хытӑ,
Чӗрнесем юнланиччен
Ҫатӑртаттарса эс тыт та,
Вырт ҫунан ана ҫинче!
Эс ҫуран, эс—хир патши,
Е юта пустарӑн-ши!

Качӑр-качӑр танк хӗресӗ
Чуна ҫӗҫҫӗн хӑйӑрать.

Эс çуран. Хуçа халь эсӗ
Çак тăма, çак хăйăра...
Ур, тулăш эс, вил, анчах
Каялла пӗр шит ан чак!

Пулчӗ: вилчӗç те—чакмарӗç.
Аслă çӗрӗмӗр—анне!
Нихăçан манмалла мар эс
Сталинградăн салтакне.
Манмăн, манмăн: çавăнтан
Çӗнӗ чап пуçланчӗ сан.

5.

Эпӗ—калăпсăр машинăн
Пӗчӗкçеççӗ пӗр винтти.
Мильоншар ман пек вӗтти.
Анчах чунӗ—пысăк çыннăн,
Мăн чунах, çав вӗтӗсен,
Вăл калать, итле пӗлсен:
Эп—этем! Ак манăн чинăм.

Кӗвӗçместӗп эпӗ: пултăр
Генерал та, маршал та.
Анчах манăн пур шалта
Хамăн тивӗç, эпӗ шутсăр
Мухтанатăп унпалан:
Ман ята нимрен малтан
Асăнать çулпуçӗ, вулăр.

„Хӗрлӗармеец юлташсем!" тет
Пур приказ та малтанах.
Анланас пулать ăна!
Çавăнпа... мӗскер тес ӗнтӗ?—
Хамăн хӗсӗк окопра
Эп генералах вара,
Ăна пинӗн итлесен те.

Ман окоп сыхлать ыр-сыввăн
Генералăн блиндажне,
Генерал—хăй маршалне,

Маршал, калăнăр, çĕршывăн
Чĕрĕкне те—Мускава.
Мускавра камне хăвах
Эс чухлан... Асту, ан сывăр!

Мускавра, хăть бомбăлатăр
Çĕр çурса тăшман ăна,
Пĕр этем пур яланах:
Вăл курать сан окопна та,
Калаçать ачупала,
Чăннипе—ăна пула
Эс çын евĕр пурăнатăн.

Ак ăçта эс çывăхартăн,
Пĕчĕк винт, ерипеле.
Чим-ха, эс пыра-киле
Кремльте черкке хăпартăн...
Халлĕхе санра тапать,
Тĕнчене пулса шăпа,
Вут чĕрийĕ Сталинградăн.

6.

„...Ыранхи бойра пĕтсен—
Коммунист тесе хисеплĕр",
Ак çапла салтак кĕскен
Тăрмалать кĕрхи сивлек çĕр.
Ак çаплах эп те иккен
Çыртăм, нимĕн тĕлĕнмесĕр.
Эп—чĕлхе лаççи, анчах
Тупаймарăм тек сăмах.

Шурăмпуçĕ кăвакарчĕ...
Кăвак мар çав—хĕп-хĕрлех!
Кама мĕн—асра ват карчăк
Аннемех пĕкĕрĕлет:
Яланах вăл вăранатчĕ
Шурăмпуçпеле пĕрле.
Миçе çаврăнчĕ-ши кĕçĕр
Çĕрĕпе вăл, тĕлĕрмесĕр?

Карласа ларать мăян,
Хытхура та йӳç шурарăм.
Вăл та час минăпалан
Кукшаланĕ лакăм-лакăм.
Чĕрĕ, сывă-ха паян,
А ҫуна тин çеç пуçларăм.
Хĕвел тухрĕ ерипе,
Вăл та—тупă етри пек.

Ик тĕнче. Ик çул. Ик шухăш.
Икçĕр утăм хушшăмăр.
Чăмартанчĕ чун. Юн шухă.
Мăян айĕн шурăмăр.
Вилĕмӳ патне эс шу-ха!
Те минут, те çур ĕмĕр...—
Вăхăт çитрĕ. Кĕç гранаттăн
Шартлатса çĕр çурăлассăн...

Кам пĕлет: тен, çав кунне
Пуçласа эп пӳлтĕм пулĕ
Антăхан тăшман çулне.
Çав траншейăри юн кӳлĕ,
Çав йӳç эрĕм, ĕмĕрне
Тен вăл чикĕ пулса юлĕ:
Ырăпа усал чикки,
Тейĕ пурнăç кĕнеки.

## 7.

Çĕнтерӳ юрри юрлатăп.
Тултарсамăр куркăра та
Тăкăр кăшт тутаниччен:
Каяна хисеп тусамăр,
Тăприсем çăмал пулайтăр
Чыслăн вилнĕ паттăрсен!
Вăрçă пулчĕ урăм-сурăм,
Кам пĕлет: тен, эпĕ юлтăм
Ротăран та пĕр пĕччен...

Вĕлтĕр-вĕлтĕр-вĕлтĕр юр...
Çуна çук та—йĕлтĕр пур,
Йĕлтĕр пур та, йĕрĕ çук-ха.
Çил—хаяр улать ялан,
Сылтăмран, сулахайран
Тыттарать вăл вăрттăн çупкă.
Кăчăр пулчĕ Дон хĕрри,
Леш енче тăшман çарри,
Мĕн шутлать вăл? Пĕл-ха, чуп-ха!

Лăпкă Дон тӳлекех марччĕ:
Кĕперне, асту, ан сарччĕ,
Бомбăлаççĕ сарсанах.
Кимĕпе, асту, ан курăн,
Вайкăнатăн чикĕм-пуçлăн:
„Фердинанд" куçлать сана.
Вĕрен ан тăс эс шыв урлă:
Ку шывра шултра, тет, пулă,
Тунсăхлать вăл тахçанах.

Сармаллах-çке кĕперне!
Пĕрне ватĕç, тепĕрне...
Тен, пĕр çиччĕмĕш çĕкленĕ.
Тытмаллах-çке кимхӳри!
Пĕри путĕ, ну тепри...
Теприне, тен, Дон хĕрхенĕ.
Тăсмаллах-çке вĕренне!
Вуннăш... çирĕмĕш... пĕрне,
Тен сăнаймĕ шыв леш енĕ.

Малтанхи юр кăпăш, лайăх.
Вăтăр çын—пĕр вунă халăх,
Вунă халăх—вун чĕлхе.
Ĕнтĕркет туркмен пăртакçĕ,
Çĕпĕрсем кăшт тăрăхлаççĕ:
—Ку хĕлле-и! Эх-хе-хе!..
—Чимĕр халĕ! Шăрăх пулĕ!..—
Шуса антăмăр каç кӳлĕм
Шыв хĕрнех, пĕр вĕтлĕхе.

Ак, атьсемӗр, пулчӗ каҫ!
Пӗр хушуччӗ: вил те каҫ!
Юхрӗ кимӗ, юхрӗ сулӑ:
Пӗрене, хӑма та шпал,
(Ан йӗпентӗр ҫеҫ пӑшал)
Плащ-палатка, ҫатан-хулӑ...
Лӑпкӑ Дон ес, лӑпка Дон!
Каҫарсам пире вӑрттӑн,
Кур,—епле эпир хӑюллӑ!

Чи шултра хума вататпӑр.
Кӗҫ—ракета, кӗҫ тата пӗр...
Ылхантармӗш асамат!
Аҫа ҫапрӗ, ҫурӗ ҫумӑр...
Лӑпкӑ Дон, ан ур, ан ҫухӑр,
Чӗрене эс ан хӑрат...
Чӗрере ҫав каҫ, пӗлетӗп,
Вуннӑ мар, ҫӗр чӗлхене те
Пӗр сӑмахчӗ: Сталинград.

Ҫавӑнта ман тапмалла
Пур чӗлхеллӗ ҫарпала,
Ҫав ятпа ҫӗкленчӗ халӑх.
Ҫавӑнта ман ҫитмелле
Асаппа та тертпеле,
Сарлака, юлташ, каҫалӑк!
Авӑлхи тус Атӑла—
Дон халь алӑ памалла
Ӗмӗр ӗмӗр асӑнмалӑх.

8.

Юрлӑ, ҫумӑрлӑ та ҫиллӗ,
Куҫ уҫма ҫук сӑлпӑран.
Каҫпала шӑнтать те вирлӗ—
Витӗрех эс пӑрланан.
Пӗр хӗлхем ҫунать пӑр айӗн,
Унпа ҫеҫ чӑтать ӗнсе:
Шӑл ҫыртса, упаленсе,
Ҫиле хирӗҫ, ҫиле майӑн.

Паулюс пагне йалмак
Сӗтӗретӗн эс, салтак!

Виҫҫӗр пинӗн йӑлмакланчӗҫ,
Лекрӗҫ пирӗн майкӑҫа.
Хӑтӑлма вӗсем хӑтланчӗҫ —
Майкӑҫ пӑврӗ хӗл каҫах...
Мина айӗн, тупӑ хыҫҫӑн,
Хӑшчухне туртса ҫуран,
Ҫӗмрӗлсе юлсан хуран —
Чӗр кӗрпе ҫисе е выҫҫӑн,
Кун-ҫӗрне манса йӑлтах,
Тӑрмашатӑн эс, салтак!

Манас ҫук кӑра январӗн
Ҫилсӗр вуннӑмӗш ирне.
Тинкерсе темскер тӑнларӗ
Икӗ лагерь пӗр-пӗрне.
Шӑпчӗ пӗтӗм ҫутҫанталӑк,
Вӑл та тем тӑнланӑ пек.
Анчах иртрӗ майӗпе
Рокоссовский панӑ тавлӑк.
Вӑрӑм тавлӑк пулчӗ-ҫке!
Нимӗҫе — питрех кӗске...

Парӑнмасть, тет, нимӗҫ, имӗш:
„Юрӗ! — терӗҫ салтаксем, —
Ху ҫинех тиентӗр, нимӗҫ,
Ҫылӑху-сӑвапусем!..“
Пӗлӗте ҫурса, хӗвел кӗҫ
Печӗ анӑҫ еннелле.
Хӗвелпе пӗр мехелех
Тупӑсем ҫӗре кисретрӗҫ.
Пулчӗ ахӑр-самана
Асӑнмалӑх тӑшмана!

* * *

Юрлӑп, терӗм, юррине те
Калӑп, терӗм, халлапне.

Юрлаймарăм çуррине те,
Калаймарăм чĕрĕкне.
Камшăн хаклă манăн тертĕм?
Пулнă-иртнĕ тахçанах.
Каппаймастăп эп, анчах—
Рядовой пулса сӳнтертĕм
Сталинградăн çулăмне,
Мĕн хушас-ха кун çумне?

Çĕнтерӳ юрри вĕçлетĕп.
Тултарсамăр куркăра.
Эп паян пĕрне çĕклетĕп:
Юратушăн пултăрах!
Юрату иртетчĕ мар-и
Штык çинче çеçкепеле?
Шăнăçусăр чĕр çилле
Хĕртрĕ мар-и ун кăварĕ?
Кукленмерĕ-и унпа
Ялав айĕн чĕр тупа?

Юрату çĕнтерчĕ мар-и?
Унăн çутă куçĕнчен
Хура мур, этем хаярĕ
Пăхаймарĕ нумайччен.
Юрату вăл—пире танлăи,
Ашă аллăн, ыр та сыв
Ӳстерен Тăван Çĕршыв.
Юрату вăл пирĕн—Сталин.

16416

ТУПМАЛЛИ:

| | Стр. |
|---|---|
| Пархатар юрри | 3 |
| Инспектор | 10 |
| Тантăшсем | 13 |
| Харсăр ăмăрткайăк | 17 |
| Аннене | 19 |
| Ман çăлтăр | 21 |
| Мунча шăрши | 22 |
| Çиле хирĕç çӳрен ут юртать | 23 |
| ...Пӳртне-и? Вучахне те хăварман | 24 |
| Эльгере, Чăваш поэчĕсене | 25 |
| Саламպи | 27 |
| Çуркуннен туйăнмасть-и сире | 32 |
| Пурăнах, Чăваш çĕршывĕ | 33 |
| Çĕнтерӳ юрри | 39 |

Перевірено 1948 р.
ДЕРЖАВНА
НАУКОВА БІБЛІОТЕКА
ім. КОРОЛЕНКО Харків
№ Б-19896
26/VI 1947 р.
6968

Редактор А. А. Эсхель.

НТ 00485. Подписано к печати 28/III-47 г. Тираж 3000 экз.
Заказ № 0347. Тип. № 1 при Совете Министров Чуваш. АССР

18418

Хакĕ 2 тен.
Цена 2 руб.



П. ХУЗАНГАЙ

# ПЕСНЯ ПОБЕДЫ

на чувашском языке

Чувашгосиздат
Чебоксары—1947